К.В. Иванов ҫинчен унпа пĕрле вĕреннĕ Н.И. Кухарева каласа кăтартни / Н. Данилов ҫырса илнĕ // Чăваш коммунĕ. – 1940. – 17 юпа.

# К. В. Иванов ҫинчен унпа пĕрле вĕреннĕ П. И. Кухарева каласа кăтартни

Эпир Константин Васильевичпа ҫак енчен хурăнташлă: ман анне Анастасия Васильевна Константин Васильевич асламăшĕпе пĕр тăван пулнă.

Ҫуралнă эпĕ Ăхпуҫĕнче, 1890 ҫулта. Анчах тĕрлĕ ялта ҫуралнă пулин те, Константин Васильевичпа эпĕ час-часах курнăҫнă: унпа пĕрле Чĕмпĕре вĕренме кĕнĕ, каникулсенче те киле пĕрле ҫÿренĕ.

Сăмах майăн каласан, Константин Васильевич пирĕн ялта, Ăхпуҫĕнче, икĕ ҫул вĕреннĕ тени пĕртте тĕрĕс мар. Вăл кунта пĕр кун та вĕренмен. Унăн мăнаккăшĕ Евгения Николаевна пирĕн яла Константин Васильевичпа иксĕмĕре Чĕмпĕре вĕренме леҫсе хăварсан тин Кекен ялĕнчен куҫса килчĕ. Куҫса пычĕ те, ҫав хĕллех ăш чирĕпе чирлесе вилчĕ.

Сăмах майăнах тепĕр ыйтăва та тĕрĕсрех ҫутатса хăвармалла. Константин Васильевич Чĕмпĕре 1903 ҫулта кăна мар, 1902 ҫулта та, Чăваш шкулне вĕренме кĕме тесе, кайса пăхнă. Анчах вăл ҫулхине унта прием пулман пирки калле таврăннă та, Белебейри городской училищене вĕренме кĕнĕ. Белебейре вĕреннĕ чухне вăл хваттерте Семен Сергеевич Игнатьев патĕнче тăнă пулас.

Асламăшĕ каланă тăрăх Белебейре вĕреннĕ чухне ăна хулари ачасем нумай тарăхтарнă, виртленĕ, мăшкăласа кулнă, пĕрре хĕненĕ те. Ҫавăнпа вара вăл тепĕр ҫулхине ҫине тăрсах Чĕмпĕре вĕренме куҫса пычĕ.

Чĕмпĕрте вăл, вĕреннинчен пуҫне, ытти кĕнекесем питĕ нумай вулатчĕ. Ҫавăнпа ăс-тăнĕ унăн пур енчен те вăйлăн аталаннăччĕ.

Вăл хăйне ҫи-пуҫ тĕлĕшĕнчен те, ҫынпа калаҫас-тăвас енчен те питĕ культурлă тытатчĕ. Кирек хăҫан та лăпкăн, пĕр тикĕс утса ҫÿретчĕ. Ҫынсемпе харкашни-мĕн нихăҫан та пулман. Анчах ăна ниепле те хавшак, хуҫăк кăмăллă, е тепĕр енчен — мăнкăмăллă ҫын пулнă тесе те калама ҫук. Чăн та, вăл шавах тем ҫинчен шухăшласа ҫÿресе, ҫынсемпе ытлашши калаҫсах кайман пирки, хăшĕ-пĕрисем ун ҫинчен апла та, капла та шухăшлама пултарнă ĕнтĕ.

Хуть те хăш ĕҫе те вăл юратса ĕҫленĕ. Ҫын шучĕпе пурăнасси ҫинчен нихăҫан та ĕмĕтленмен. Художествăллă пултарулăх тĕлĕшĕнчен таланчĕ пысăк пулнă. Ашшĕ портретне вăл каснă-лартнă ашшĕн чăн сăнĕ пекех тунăччĕ.

1912 ҫулта эпир унпа Чĕмпĕре пĕрле кайрăмăр. Ҫул май пароходпа Ĕпхÿпе Хусан урлă иртрĕмĕр. Чĕмпĕре ҫитсен фотографире хамăр сăна ÿкерттертĕмĕр. Июнĕн 29-мĕшĕнче ҫырнă ҫырура эпĕ ăна ҫав карточкăсем ҫинчен, астутаратăп. *) Хăйĕн карточкине вăл мана: «На память племяннице» тесе ҫырса пачĕ.

---

*) Кунта Пераскева Игнатьевна К. В. Иванов патне янă хăйĕн ҫырăвĕ ҫинчен асăнать. Вăл ҫырăва Константин Васильевич йăмăкĕ Пераскева Васильевна литература музейне парса ячĕ. Пераскева Игнатьевна та Константин Васильевич карточкине музее асăнмаллăх пачĕ.

**Н. ДАНИЛОВ ҫырса илнĕ.**